Эрехре-ши айăпĕ?

«Этемĕн çын пулмалла. Е юлашки черкке айăплă мар...»

Урамра арçынпа хĕрарăм хирĕçеççĕ. Упăшки арăмĕнчен укçа ыйтать пулас. Арăмĕн аллинчен укçа енчĕкне туртса илчĕ, ăна тĕксе ячĕ. Хĕрарăм, 5 çулсенчи ачине çавăтнăскер, унпа пĕрле кăшт çеç кайса ӳкмерĕ: ача, хăранипе-ши, ыратнипе-ши, йĕрсе ячĕ. Ывăлĕ макăрни те, мăшăрĕн куçĕсем куççульпе тулни те арçын чĕрин пĕр хĕлĕхне те пырса сĕртĕнмерĕç. Мухмăр чĕртме столовăй енне утрĕ... Ачине канфет илсе çитерес укçине ĕçсе ячĕ-ши е урине пушмак илсе тăхăнтартмаллине? Кун çинчен арçын шутламарĕ.

Мĕн чухлĕ куççуль тăкăнать пуль эрехе пула. Ĕçекенсенчен хăшĕ те пулин ăнланать-ши хăй çемьене инкек хыççăн инкек кӳнине. Ăнланакансем пур иккен. Эрех ĕçме пăрахнă хыççăн. Муркашра пурăнакан В. Ф. Семенов çак сиенлĕ йăларан 20 çул каялла хăтăлнă. Ку проблема çине паян вăл çапла пăхать:

– Цианистăй калие тăнлăпуçлă çын çăвара хыпмасть вĕт. Вăт, эрехпе пирус та маншăн çавăн пек паян.

Хăй пĕрремĕш хут алла черкке тытнă вăхăта халĕ 57 çулхи арçын çапла аса илет:

– 8 класс пĕтернĕ хыççăн эпĕ Çĕмĕрлене вĕренме кайрăм. Пиччесем, атте ĕçеççĕ. Ман та часрах çитĕнес килетчĕ. Çын ĕçсен-туртсан пысăк çынсен шутне кĕнĕн туйăнатчĕ. Шутласассăн, мĕн пĕчĕкренех пире эрех ĕçме «программăлаççĕ»: аслисем эрех ĕçеççĕ, савăнаççĕ. Ача çакна курса ӳсет вĕт. Пуçра ун çынсем эрех ĕçнĕ хыççăн савăнни кĕрсе çирĕпленсе юлать. Çавăнпа та эрех ĕçнин сăлтавĕсене шыриччен чи малтан çав программăран хăтăлмалла.

Çамрăклах вăл çак витĕме лекет: пурте туртаççĕ, ĕçеççĕ. Эс мĕнрен кая. Çапла майпа 17 çултах канмалли кунсенче час-час алла черкке тытма пуçлать. Сăлтавсем те тупăнатчĕç ĕçмеллисем. Тата ĕçес текене сăлтавĕ кирлех-ши?

– Авлансан, ĕç укçинчен хам валли пытарса хăвараттăм, - калаçăва малалла тăсать вăл. – Эп тата çынсем пек ĕçме пĕлместĕмччĕ. Юлташсем ĕçетчĕç те начальник куçĕ умне лекместчĕç. Эп тӳрех ертӳçĕ тĕлне пулаттăмччĕ. Çапла майпа преми те лекместчĕ мана, хваттер черетĕнчен те тӳрех 10 çын каярах куçарса лартатчĕç. Ĕçре те ĕçкĕри пекчĕ. Ĕç шухăшĕ пулман. Ĕçкĕре ĕç çинчен калаçаттăмăр. Ĕçекен çын вăл тата çын вырăнĕнче те мар. Ĕçре тĕрĕссине каласан та наччасах начальство ун çăварне «хупать».

– Мăшăру калана сăмахсем чĕрене тиветчĕç-и?

– Ĕçекен çыншăн ним çеттуй япала та çук. Çывăх çынсен чĕре ыратăвĕ çинчен шухăшламан ун чух. Халь мăшăрăм çапла калать: «Ачасем кашни кунах атте паян та ӳсĕр килет-ши, тесе ыйтатчĕç». Тав Турра, икĕ ача та йĕркеллĕ çитĕнчĕç. Мăшăрăма тав уншăн. Вăл тăрăшрĕ хĕрсемшĕн. Тепĕр чух тата упăшкисене кура арăмĕсем те ĕçке ерсе каяççĕ. Телее, ман арăм ун пек пулмарĕ.

– Ĕçме пăрахма йывăр, теççĕ.

– Пĕр кунтах сăра, эрех ĕçме пăрахрăм. Малтанласа «событыльниксенчен» уйрăлма кăмăл çирĕплĕхĕ кирлĕ, кайран каять вара.

Алкоголизма паян чир теççĕ. Килĕшесех килмест манăн çакăнпа. Чир мар вăл, психологи тĕлĕшĕнчен нуша курни. Медикаментсемпех сывалаймастăн. Çынна намăслантарни те усси çук. Вăл ахаль те психологи тĕлĕшĕнчен инкекре. Ку тамăкран хăтăлмалли меслете Санкт-Петербург ученăйĕ Г.А. Шичко шутласа тупнă. Унăн методикипе 10 кунта алкоголизмран сывалма пулать. Мĕн тунине кунсерен дневник çырса пырса, çав ачаран çирĕпленнĕ программăна тĕпретсе пырса тĕппипех пĕтеретĕн çапла майпа. «Кодироваться» тунă çын çав тапхăр вĕçленсен çĕнĕрен хăйне ирĕккĕн туйса ĕçме пуçлать. Апла пулсан вăл психологи тĕлĕшĕнчен алкоголизмран хăтăлман. Вăхăтлăха чарăннă çеç. Шичко меслечĕ вара çынна шухăшпа, ăс-тăнпа шутласа ĕçме пăрахма пулăшать. Пуçтарăнаттăмăр малтан ку меслетпе сипленме. 1989 çулта хам та çӳрерĕм унта. Шел, хăй вăхăтĕнче çакна ăнланса аталанма май памарĕç.

Паян тата пирĕн пурнăçа «культурăллă ĕçмелле» текен сăмах çаврăнăшĕ кĕчĕ. Эрех, пирус вăл – наркотик. Наркотикпа юнашар ăçтанха культура валли вырăн? Культурăллă ĕçмелле тени çав алкоголизм пирамидин тĕп никĕсне хуни пулать те. Çамрăксем урамра ĕçсе йăваланса выртаксенчен мар, çав «культурăллă» ĕçекенсенчен шăпах тĕслĕх илеççĕ те.

– Хамăрăн пĕр калаçура пĕр йĕркеллĕ вырăнта ĕçлекен хĕрарăмах çапла каланăччĕ: «Ĕнер ман кӳршĕ ӳсĕр çапкаланса килчĕ килне. Нумай çул ĕçменччĕ-ха вăл. Ну-у, савăнтăм вара», – терĕ. Ĕçсе хăвăр çынна савăнтарнине туймастăрччĕ-и?

– Тамăка каякан çын унта пĕччен каясшăн мар. Халĕ те çаплах. Çынна çын юратманни пур çав пирĕн. Халь те тепĕр чух тĕксе калаççĕ: «Вăл ĕçмест те», – теççĕ. Малтан мухмăр чĕртмелле чух никам та пĕр черкке ярса памастчĕ. Халь ку енĕпе астаракансем тĕл пулсах тăраççĕ. Кунта эпĕ çакна каласшăн: юлашки стакан айăплă мар. Пĕрремĕшне тытмалла мар. Халь пĕлеççĕ те эп ĕçме пăрахнине - сĕнмеççĕ.

Ĕçкĕ çынна ыр тумасть. Ĕлĕкех каланă вĕт, эрех ĕçекен – усал ĕç тăвакан, тесе. Вырăс халăхĕ ĕмĕрĕпех ĕçнĕ, тесе тепĕр чух хамăра тӳрре кăларма тăрăшатпăр. Апла мар, вĕсем эрех ĕçмен, квас ĕçнĕ. Пĕтĕм инкек эрехрен пуçланнине эрехе алла иличчен ăнланни кирлĕ.

– Ачăрсем хăвăртан тĕслĕх илессе шутламан-и ун чух?

–Эрех этемĕн лайăх енĕсене тĕппипех хуратса хурать вĕт. Мĕн шутланă пуль. Халь çамрăксем сăра ĕçеççĕ. Сăра алкоголизмĕ пуррине манмалла мар. Арçын ачасен – сăраран, хĕр ачасен шампанскинчен пуçланать алкоголизм чирĕ.

Халь мĕн чухлĕ çамрăк ĕçет. Хĕрсем пирус туртаççĕ. Ашшĕ-амăшĕ чĕрĕ-сывă çĕртех мĕн чуль ача интернатра ӳсет. Хĕрарăмсем ĕçеççĕ. Хĕрарăмсем ĕçсен пурнăç пĕтрĕ вара – ачасен те, çемьен те ним малашлăхĕ те çук.

– Ĕçекен çынна килтисем чараймаççĕ пулĕ?

– Çук. Çыннăн хăйĕн пуçра пулмасан, ним усси те çук çын калани. Тапхăрăн-тапхăрăн пĕтерсе пымалла усал пулăма. Çыннăн пурнăçа çын пек пурăнмалла. Çуралнă чухнех ăна Турă хăйĕн пайне – чунне панă. Ăна таса тытмалла пирĕн.

Халь пăхăр-ха, телевизорпа сăра-эрехе реклама параççĕ. Укçа тăваççĕ çапла майпа. Äçта укçа, унта ыррине кĕтме çук вара. Патшалăх хăй çине илесшĕн мар пек туйăнать тепĕр чух ку проблемăна татса парассине. Äçта укçа – унта Турă çук. Унта урăх хаклăхсем. Халь çылăхран хăрами пултăмăр. Иккĕн Турă патне çылăх каçарттарма пынă, тет. Пĕрремĕшĕ çылăхĕшĕн питĕ кулянать, тет. Тепри: «Ман вак-тĕвек çылăхсем кăна-ха, Турă каçаратех пулĕ», – тесе калать тет. Турă хыт кулянаканне пысăк чул йăтма, вактĕвек çылăхсем тăвакана вак чулсем пуçтарма хушать. Кайран вĕсене вырăна кайса хума калать. Йывăр чул йăтаканни ăна тӳрех вырăнне хурать. Вак чулсене пуçтараканни вырăнĕсене те тупса пĕтереймест. Çылăх вактĕвек пулмасть. Эпир çитĕннĕ чух Турă çук тесе вĕрентсе ӳстернĕ. Халь Турри те пур, тем те пур. Тулĕк магазина кайма та, чиркĕве кайма та укçа кирлĕ. Чиркӳре çурта лартса тухаççĕ те – çылăх каçрĕ, тесе шутлаççĕ. Унтан Тур пулăштăр, тесе черкке ӳпĕнтереççĕ. Турра ĕненни чиркĕве кайса пуç шăтса кайиччен пуççапнинче мар-çке. Турра йышăнтăнтăк, вăл ăшра пулмалла.

Пирĕн Порфирий Иванов вĕрентнĕ пек çут çанталăк саккунĕпе пурăнмалла. Аса илер-ха вăл вĕрентнĕ 12 правилăран хăшне-пĕрне: эрех ĕçме, пирус туртма хушмасть вăл, пурне те сывлăх сун, уйрăмах ватă çынсене. Хăв сывлăхлă пулас тесен, хăвăн та ыттисене сывлăх сунмалла. Çут çанталăка ан варала, хăвăнти ĕмĕтсĕрлĕхе, кахаллăха, икĕпитлĕхе, суяна, мăнкăмаллăха пĕтер, çынна пулăшма, ыр тума тăрăш, çын çинчен усалпа ан калаç, шан вĕсене, ыттисем хăв çинчен тĕрĕс мар каланине те чĕре çывăхне ан ил, ĕçпе сăмах та пĕр килтĕр, чи кирли - ĕçе тумалла, çынна ыр тунипе ан мухтан тата ытти те.

Эпир вара çут çанталăка улталаса пурăнатпăр. Çут çанталăкран лайăххине, ăшшине илме хăнăхнă эпир. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе, çут çанталăк саккунĕпе пурăнмалла пирĕн. Выльăхсем шухăшлама пĕлмесен те ун саккунĕпе пурăнаççĕ. Эпир вара – тăнлă-пуçлăскерсемех, çапла тăвасшăн мар. Этемĕн çын пулмалла. Вара ĕçке те ерместĕн.

Л.ПАВЛОВА
калаçнă.

Йăла-йĕркесем

Пан улми Спасĕ

Ытларах чухне шăпах çак ятпа калатпăр Иисус Христос Турă çĕнелсе улшăннă куна (Преображение Господне) – православи тĕнĕн чи пĕлтерĕшлĕ 12 уявĕнчен пĕрне.

Иисус Христос Голгоф тăвĕ çинче хăйне пăталассине пĕлсе, унччен хăйĕн вĕренекенĕсемпе – Петр, Иоанн тата Иаков пулас апостолсемпе – Фавор тăвĕ çине улăхать. Вĕренекенĕсем ту патĕнчех çывăрса каяççĕ. Вăрансан вара вĕсем Иисус Христосăн пичĕ те, çи-пуçĕ те тĕлĕнмелле илемлĕн, хĕвел пек çуталса тăнине тата Вăл Моисейпа Илья пророксемпе калаçнине кураççĕ. Вĕсен куçне курăнман Турă Ашшĕпе Çеттуй Сывлăш Турри те çавăнтах пулнă.

Иисус Христос çапла çĕнелсе улшăнни хăйĕн пек шутлакансен шухăшĕсене çĕнетсе улăштарнипе пĕр тан килет. Лайăххи, ырри енне çĕнелсе улшăнма никам та нихăçан та кая юлманнине те пĕлтерет.

Çак кун вара чиркӳсенче çынсем яланах нумай. Вĕсем пан улмисене, грушăсене тата иçĕм çырлисене çутатаççĕ. Çапла майпа çынсем Турăн пилне илеççĕ.

Совет саманиччен августăн 19-мĕшĕччен пан улмисем çиме юраманни те çирĕп йăлара пулнă. Спас кунĕнче вара халăх пĕрле савăннă, пĕр-пĕрне пан улмипе сăйланă, çăкăрбулка таврашне те пан улмипе усă курсах пĕçернĕ. Ĕлĕкрех вара Спас кунĕнче пуянсем пан улмие лавĕ-лавĕпе туянса чухăнсене тата чирлисене валеçсе çитернĕ.

Пурăнмалли çурт-йĕр тата коммуналлă хуçалăх

Капиталлă юсав ĕçĕсем вĕçленеççĕ

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2008 çулхи декабрĕн 11-мĕшĕнчи 380 № Постановлениййĕпе (улшăнусене 2009 çулхи февралĕн 24-мĕшĕнче кĕртнĕ) килĕшӳллĕн кăçалхи çул пирĕн районти 9 çуртра капиталлă юсав ĕçĕсем ирттерме палăртнăччĕ. Ку ĕçсене тунă – çынсен пурнăç условийĕсен хăрушсăрлăхне тата çуртсенчи тирпей-илеме тĕп вырăна хунă. Нумай хваттерлĕ çуртсен капиталлă юсав ĕçĕсен шутне çивиттисене, çурт ăшĕнчи тĕрлĕ инженери системисене, унти путвалсене юсаса çĕнетни тата çуртăн стенисене тул енчен ăшă тытакан туса юсани кĕрет.

Кăçалхи юсав ĕçĕсене пурнăçлама ЖКХ-ра реформăсем ирттерме пулăшакан фондран, республика тата вырăнти бюджетран уйăрнă, çавăн пекех юсама палăртнă нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансем пухнă укçатенкĕпе юсă курнă. Пĕтĕмĕшле сумма 11159755 тенкĕпе танлашрĕ.

Постановленире палăртнă пек, капиталлă юсав ĕçĕсене ирттерме подрядчиксене ятарлă комисси суйласа илчĕ. Çапла вара палăртнă ĕçсене «Моргаушская» МСО (Мăн Сĕнтĕрти Заводская урамри 22-мĕш çурт, Муркашри Ленин урамĕнчи 38-мĕш çурт тата Ярославкăри Центральная урамри 2-мĕш çурт), «Интер-Волга» чикĕллĕ яваплăхлă пĕрлешӳ (Муркашри Октябре 50 çул урамри 10-мĕш çурт), «ТУС Строй-Вертикаль» (Мăн Сĕнтĕрти Новая урамри 32-мĕш çурт), «Стройтехсервис» чикĕллĕ яваплăхлă пĕрлешӳ (Муркашри Ленин урамĕнчи 32-мĕш çурт; Москакассинчи Молодежная урамри 6-мĕш тата 8-мĕш çуртсем), «Заря» чикĕллĕ яваплăхлă пĕрлешӳ (Муркашри Южная урамри 5-мĕш çурт) пурнăçларĕç.

Паянхи куна комисси (унăн тытăмне район пуçлăхĕ хушупа çирĕплетнĕ) тĕрĕслевсем ирттерсе 9 çуртран 7-шне йышăнчĕ. Мăн Сĕнтĕрти Новая урамри 32-мĕш тата Муркашри Ленин урамĕнчи 38-мĕш çуртсене вара комисси юсав ĕçĕсенче тупса палăртнă çитменлĕхсене пĕтерсен йышăнать.

Пĕтĕмĕшле калас пулсан, комисси çуртсене юсакан организацисем пахалăхлă тата вăхăта тăсмасăр ĕçленине палăртрĕ. Нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансем те ĕçе тивĕçлĕ пурнăçланăшăн строительсене тав сăмахĕ каларĕç.

9 çуртра капиталлă юсав ĕçĕсене ирттерме пурĕ 10156365 тенкĕпе танлашнă. Çапла вара перекетленнĕ 1003390 тенкĕ Мăн Сĕнтĕрти Новая урамри 34-мĕш çуртăн (ăна программăн хушма списокне кĕртнĕ) çивиттине юсама каять.

С. ФЕДОРОВА,
пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан компанийĕн тĕп специалисчĕ – комисси секретарĕ.

Сăн ӳкерчĕкре: комисси çуртсен çивиттийĕсене те тимлĕ тĕрĕслерĕ.

Культура тата çĕр ĕçченĕ

Библиотекăсем – йĕтем çинче

Кăçалхи çул Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ пулни çинчен библиотекарьсем те манмаççĕ. Çавна шута хурсах Оринин ял тăрăхĕнчи библиотекарьсем ял ĕçченĕсене тĕрлĕ информацине вăхăтра тивĕçтерме тăрăшаççĕ. Ака-суха вăхăтĕнче, тыр-пул пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра хуçалăх ĕçченĕсем патне хаçат-журналсемпе, кĕнекесемпе тухса тĕрлĕ калаçусем те ирттереççĕ.

«Оринино» хуçалăхри йĕтем çинче библиотекарьсем ятарлă стенд та туса çакнă. Ку стенд çинче темĕн тĕрлĕ информаци те пур. Информацие вара тăтăшах пуянлатса, улăштарса тăраççĕ.

Сăмах май каласан, пирĕн библиотекăсем çуллахи вăхăтра та вулакансенчен чухăн мар. Авăн уйăхĕнче шкулсенчи ĕçпе кану тата ытти тĕрлĕ лагерьсем ĕçлеме пуçларĕç. Пушă вăхăта ачасем ытларах библиотекăра ирттереççĕ. Хаçат-журналсемпе тата кĕнекесемпе çеç интересленмеççĕ вĕсем, илемлĕ фильмсемпе мультфильмсем те кураççĕ.

Л. МАКСИМОВА,
Атапайри библиотека ертӳçи.

Сăн ӳкерчĕкре: «Оринино» хуçалăхри йĕтем çинче кану вăхăтне те усăллă ирттереççĕ.

Халăх сăнанинчен

Тулăна тĕтреллĕ кун аксан аван пулать.

Çĕнĕ уйăх тухмасăр тислĕк тăкас мар.

Çĕр çырли, хăмла çырли нумай пулсан, тепĕр çулхине ыраш лайăх пулать.

Кĕркунне вăрман çулçи тăкăнмасăр юлсан, халăха йывăр пулать; хурăн çулçи тăкăнмасăр юлсан – хĕрарăма йывăр килет, юман çулçи тăкăнмасăр юлсан – арçынна йывăр пулать.